ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

35 (4449) №, 2015, август (çурла), 27

(1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.

Индексĕ: 54802.

ТĔЛПУЛУ

## Хĕвел алă сулса «ăсатрĕ» Йĕпреçе!

**Урамра иккĕн сак çинче кăмăллăн шăкăл-шăкăл калаçса лараççĕ. Иккĕмĕш сыпăкри тăвансем вĕсем: Данилка Николаевпа Арина Николаева. Канаш районĕнчи Алешево ялĕнче пурăнакан арçын ача çак тĕлпулăва хăçантанпа кĕтсе пурăнчĕ! Ытла та аякра, Мурманск тăрăхĕнче тĕпленнĕ йăмăкĕ килес куна пӳрне хуçлатса шутласа пычĕ вăл. Кĕтнĕ вăхăт тинех çитрĕ.**



– Кур-ха, кур, Арина! Хĕвел хăй çулĕнчен пăрăнмасăр анать, анать... Темшĕн вăл паян ытти кунсенчи пек мар, ялкăшса та çуталмасть. Ун çине тем чухлĕ пăхсан та куçа йăмăхтармасть. Мана вăл ытама кĕми глобус пек туйăнать, – терĕ Данилка пӳрнине çӳлелле тĕллесе.

Кăвак пĕлĕт катрамĕ хĕвел çывхарасса çеç кĕтнĕ тейĕн, ăна вăштах хăйĕн хĕвне хупрĕ. Тавралăх палăрмаллах тĕксĕмленчĕ.

– Хĕвел пĕлĕте ларчĕ. Ыран çумăр çăвасса ахăртнех. Шел, ыран санăн кукаму патне Йĕпреç районĕнчи Вăтаелне каясси пулмасть ахăртнех, – терĕ арçын ача пит-куçне пĕркелентерсе.

– Унашкал шухăшлама васкар марха, – пӳлчĕ сасартăках Арина пиччĕшне.

Чăнах, тĕлĕнтермĕш тейĕн. Шĕлкăварлă хĕвел пĕлĕте виçĕ тĕлтен шăтарнă та ачасем çине йăл кулса пăхать. Пĕр харăс виçĕ хĕвел тейĕн.

– Илтетĕн-и, Данилка, хĕвел пирĕнпе калаçать! – хаваслăн çатăлтатрĕ Арина чăлтти-чалтти сиккелесе.

– Çу-у-ук! Нимĕн те илтместĕп.

– Вăл: «Ан кулянăр, ыран каллех сирĕнпе выляма тухатăп. Каç енне ырă çул сунса Йĕпреç еннелле ăсатса ярăп», – терĕ. Апла пулсан, çумăр çумасть ыран, Данилка! – терĕ Арина пиччĕшĕпе йăл кулса калаçнă май.

– Ай, йăмăкăм! Сăмах ыйтма кӳрше каçмастăн иккен эсĕ. Кăмăла çĕклеме те пĕлетĕн, – терĕ Данилка та хавхалансах.

...Чăн та, ачасене хĕвел «суймарĕ». Тепĕр кунне çанталăк уяр та ăшă пулчĕ. Ачасем аслисемпе Йĕпреç тăрăхне пĕтĕм кăмăлтан пырса кĕчĕç.

Пахчара çĕрулми кăларнă çĕрте те тăрăшрĕç пĕчĕк хăнасем. Витрене иккĕмĕш çăкăра ярса тĕпсакайне васкарĕç. Утса мар, чупса ĕçлерĕç пиччĕшĕпе йăмăкĕ. Каç енне урама выляма тухрĕç. Ара, Аринăн мăн кукамăшĕ патне те мăнукĕсем – пĕртăван Артемпа Эля тата Рома Пашковсем хăнана килнĕ-çке.

Эх, пиллĕкĕн тата хаваслăрах иртрĕ çав кун. Пытанмалла вылярĕç, «Тетте» журнала та пĕтĕм кăмăлтан шĕкĕлчерĕç.

...Паян Данилка шухăшлă. Çапах йăл кулса пăхакан хĕвел çинелле пĕтĕм кăмăлтан пăхрĕ.

– Пĕлетĕн-и, хĕвелĕм, Арина та Мурманска кайрĕ, виçĕ пĕртăван та хăйсен килĕнче ĕнтĕ паян. Çапах та асра юлмалли кунсем пулчĕç маншăн Йĕпреç тăрăхĕнче, – терĕ сасăпах.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

Канаш районĕ,
Алешево.
**АВТОР** **сăнӳкерчĕк**ĕ.

**Кашни килте «Тантăш» хаçатпа «Тетте», «Самант» журналсем пулни мĕн тери аван! Эсир вĕсене çырăннă-и? Çук? Вăхăта сая ан ярăр! Çырăнăр, юлташусене те, кӳршӳсене те калăр. Аса илтерĕр! Васкăр!**

## Вĕренекенсене кĕтет

Кашни çуллахи каникул вăхăтĕнче эпир юратнă шкула юсатпăр. Акă кăçал та коридор стенисем илемлĕ тĕспе витĕнчĕç, пӳлĕмсемпе коридор урайĕсем те сăрланă хыççăн йăлтăртатаççĕ. Шкул тавралла ачасем тăрăшса лартнă хитре чечексем илемлĕхĕпе куçа йăмăхтарса лараççĕ. Тата пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç вăл – шкулти ăшă батарейисене улăштарни. Столовăйне вара çĕнĕ савăт-сапапа, инвентарьпе тивĕçтерчĕç.

Чăнах та пысăк ĕç турăмăр каникулта. Халĕ иккĕленмесĕрех калатпăр: эпир çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕр!

Шомик шкулĕн сайтĕнчен.
Муркаш районĕ.

## Ăс пухма та кăмăллă

Кĕçех çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланать. Вĕренекенсемпе учительсем ăна кĕтсе илме тахçанах хатĕр ĕнтĕ. Шкул та тап-таса, тирпейлĕ. Кунта çулла юсав ĕçĕсем ирттернĕ хыççăн пушшех те илемлĕн курăнать. Шкул директорĕ Н.В. Большов ертсе пынипе пĕлӳ çурчĕн ĕçченĕсем çу каçа ырми-канми тăрăшрĕç. Тирпейлерĕç, юсарĕç, çĕнетрĕç, сăрларĕç тата ытти ĕçе те пурнăçларĕç.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче питех те кăмăллă пулĕ хăтлă шкулта вĕрентме, ачасене вара – тăрăшса пĕлӳ илме.

*Г. ФИЛИППОВА.*

Тăвай районĕ,
Чутей шкулĕ.

## Сентябрĕн пĕрремĕшĕ çывхарать

Çуллахи каникул сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Кашнийĕ ăна усăллă ирттерес тесе ăнтăлчĕ: вĕренекенсем те, ашшĕ-амăшĕ те, учительсем те. Вĕрентекенсем çулла та шкултан уйрăлаймарĕç, кунта ĕç вĕресе çеç тăчĕ. Йăлтах тирпей-илем кӳтĕмĕр, пӳлĕмсене çĕнĕ вĕренӳ çулне кĕтсе илме хатĕрлерĕмĕр. Çавăн пекех тулти ĕçсене те пурнăçларăмăр: шкул территорийĕнчи курăка çулса тирпейлерĕмĕр, чечек клумбисене йĕркене кĕртрĕмĕр.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланни пĕчĕккисемшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăм! Ара, шкул çуменчи кĕçĕннисен ушкăнĕн пӳлĕмĕсене те юсарăмăр. Кунта хĕрачасемпе арçын ачасен ашшĕ-амăшĕ тăрăшрĕ, вĕсене чунтан тав тăватпăр. Пӳлĕмсене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтертĕмĕр, вылямалли лаптăксене çĕнетрĕмĕр. Унсăр пуçне тата нумай ĕç тума пултартăмăр.

*С. НИКОЛАЕВ, З. ПЕТРОВА.*

Çĕмĕрле районĕ,
Хутар шкулĕ.

## Спортзала тĕпрен юсарăмăр

Кăçалхи çулла шкулти спортзала юсас ĕç ăнăçлăн пычĕ, нумай пулмасть вĕçленчĕ. Вăл тренер пӳлĕмĕсене, хĕрачасемпе арçын ачасен душ кĕмелли кабинкăсене юсанинчен пуçланчĕ. Кивĕ чӳречесене çĕннисемпе улăштарчĕç. Халĕ вĕсем пластикран.

Спортзалти маччана ăшă тытмалла турĕç, стенисене çĕнĕрен сăрларĕç, çутă пралукĕсене те улăштарчĕç.

Район пуçлăхĕсем те юсав ĕçĕсем еплерех пынине сăнаса тăчĕç. Çавна май шкула район администраци пуçлăхĕ В.И. Григорьев, районти вĕренӳпе çамрăксен политикин уйрăмĕн пуçлăхĕ С.В. Арсентьева килсе кайрĕç.

Август уйăхĕнче çеç пур ĕç те вĕçленчĕ. Çĕнетнĕ çутă та таса спортзал вĕренекенсене çитĕнӳсем тума хавхалантарсах тăрĕ.

*Л. СЫНКОВА.*

Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Хуракасси шкулĕ.



**ĂШĂ САЛАМСЕМ**

САЛАМСЕНЕ ПĔЛТЕРМЕЛЛИ НОМЕРСЕМ:
89876741833
89051975911



Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç ялĕнче пурăнакан хамăрăн чи çывăх та юратнă çыннăмăра, **Валентина Григорьевна ЛУБАШКИНĂНА,** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн хĕрӳллĕн саламлатпăр. Чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, ырлăх, телей, ăнăçу сунатпăр. Санăн куçусем савăнăçпа кăна йăлтăртатса тăччăр, хуйхи-суйхи айккинчен иртĕр. Тавтапуç сана ялан пирĕнпе пĕрле пулнăшăн!

*Юратнă упăшкипе ачисем.*

✦ ✦ ✦



**Наташа ХРИСТОФОРОВĂНА** /Вăрмар районĕ, Шутнерпуç/ çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа саламлатăп. Шкулта лайăх паллăсемпе вĕренмелле пултăр! Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кунçул, нумай лайăх юлташ сунатăп.

*Асламăшĕ Валентина ХРИСТОФОРОВА.*

**Хисеплĕ вулакансем!**
**«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2016 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн**
июль уйăхĕнчен тытăнса август уйăхĕн 31-мĕшĕччен –
**ЙӲНĔ ХАКПА!**
**«ХЫПАР» – 625,62 тенкĕ**
(кăçалхи II çур çултинчен 172,44 тенкĕ йӳнĕрех)
**«Хыпар»-эрнекун – 325,92 тенкĕ**
(19,62 тенкĕ йӳнĕрех)
**«ТАНТĂШ» хаçата – 266,70**
**«САМАНТ» журнала –187,26**
**«ТЕТТЕ»журнала–148,98 тенкĕпе çырăнтараççĕ.**

**Вут хуттмасăр çăкăр пиçмест, ĕçлемесĕр çурт-йĕр пулмасть.**

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОРШĂН
Л.ВАСИЛЬЕВА

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1112 экз.

● ЗАКАЗ
№ 3295
Пичете август уйăхĕн 26-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

АСРАН КАЙМИ КАНИКУЛ



## Савăнса ĕлкĕртĕмĕр



Çуллахи каникулта питĕ аван кантăм. Вăхăт хăвăрт иртет пулин те пур пĕрех савăнса ĕлкĕртĕм. Шăрăх кунсенче шыва кĕни, футболла выляни маншăн питĕ хаваслăччĕ. Килти ĕçсенчен те юлмарăм. Каникул вăхăтĕнче килтисене ытларах пулăшу кӳрес килет.

Июнь пуçламăшĕнче вунă кунлăх бассейна çӳрерĕм. Шел, кăçал похода каяймарăмăр. Ытти енчен вара питĕ хаваслă.

Каникул ахаль иртмерĕ. Кĕтӳ те кĕтрĕмĕр, пирĕн икĕ ĕне. Юрать-ха, пĕринче те çумăр çумарĕ. Борис Полевой кĕнекине те вуласа ĕлкĕртĕм.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне «Вĕренӳре йывăр та, çапăçура çăмăл» девизпа пуçлăп. «Тантăш» вулаканĕсене вара ăнăçу сунатăп.

*Надежда МИХАЛКИНА.*

Муркаш районĕ,
Юнкă шкулĕ.

## Çумăр та хăратмарĕ

Çуллахи каникулта асра юлмалли самант чылайччĕ. Анчах пуринчен ытла мана хамăр ушкăнпа – волейболистсем тата туристсем – похода кайни килĕшрĕ. Эпир Кондурча крепоçне çитме виçĕ кун çуран утрăмăр.

Малтанах 15 килограмм таякан кутамккана пилĕк сехет çĕклесе утрăмăр. Эпĕ шухăшланă пекех çăмăл пулмарĕ ку ĕç... Кашни сехетренех канса илеттĕмĕр, курăк çине выртса тӳпенелле тинкереттĕмĕр. Манăн юлташăм кашни чарăнăва хăйне евĕр ят пачĕ: «Поезд», «Паштет», «Кирилл» тата ытти те. Кирлĕ вырăна çитсен лагерь турăмăр. Эпир, хĕрачасем, каçхи апат хатĕрлерĕмĕр. Тĕттĕмленсен пĕр вăхăт кăвайт умĕнче лартăмăр та ывăннăскерсем çывăрма кайрăмăр.

Тепĕр кунне пирĕн çур ушкăн шыв хĕрне кайрĕ. Эпĕ вара тепĕр çуррипе çавăнтах юлтăм. Çăкăр ăшаларăмăр, тĕрлĕрен вăйă вылярăмăр. Питĕ хаваслăччĕ. Тепĕр ушкăн киличчен апат хатĕрлеме пуçларăмăр. Çав вăхăтра вăйлă çумăр çуса ячĕ. Шыв витмен плащ тăхăнса ĕçлеме тиврĕ, арçын ачасем вара çӳлтен чатăр карса тăчĕç. Ку та хăйне май хаваслăх кӳчĕ пире. Каçхине çăлтăрсене сăнарăмăр, мафи вылярăмăр. Питĕ интереслĕччĕ.

Виççĕмĕш кунне киле кайма пуçтарăнтăмăр. Çула май çăлкуç тĕлĕнче чарăнтăмăр. Киле çитсен хамăр мĕн тери телейлĕ пулнине ăнланса илтĕмĕр. Çак поход пире пысăк савăнăç кӳчĕ. Уншăн ОБЖ вĕрентекенне Владимир Константинович Лапазина тав тăватпăр. Вăл çавăн пекех волейбол тата туризм секцийĕсене ертсе пырать.

Çу пуçламăшĕнче эпĕ таврапĕлӳçĕ тивĕçне пурнăçласа Самарăра иртнĕ турслета хутшăнтăм. Унта пирĕн ушкăн малти вырăнсене тухрĕ.

Каникулпа эпĕ питĕ кăмăллă.

*Аня ЗАЙЦЕВА.*

Самар облаçĕ,
Шунтал,
1-мĕш шкул.

## Акка патĕнче хăнара



Каникул хăвăртах иртет çав. Кашни кун мĕн те пулин шухăшласа кăларсан вăл илемлĕрех пулать. Эпир те çуллахи вăхăта сая ярас мар тесе пĕчĕк çулçӳрев туса илтĕмĕр. Малтан Анат Кăтратана кайрăмăр, унтан – Чистая, каллех Анат Кăтратана, вара киле çаврăнса çитрĕмĕр. Асăнмалăх сăнӳкерчĕк чылай турăмăр.

Челнара манăн икĕ акка тата пĕр тете пурăнаççĕ. Эпĕ Оля акка патĕнче хăналантăм, унпа кашни кунах усăлма тухаттăмăр. Вырăнти паркра интересли нумайччĕ. Шуйттан урапи, Акăшсем, Лĕпĕш хурчĕ тата Кенгуру ятлă карусельсемпе ярăнтăмăр. «Бургер кинга», «Макдональдса», «Хеппи мила» кайса килтĕмĕр, тăраничченех пицца тата ролл çирĕмĕр. Шуйттан урапипе ярăннине паян та хавхалансах аса илетĕп. Малтанах кăшт хăранăччĕ, анчах шиклĕх туйăмне çĕнтертĕмех.

Оля аккапа йысна ĕçе кайнă чухне эпĕ килте тĕрлесе лараттăм. Хамăн ĕçсене пăхса савăнатăп халĕ.

Çуллахи каникула хаваслă та усăллă иртертĕм тесе шухăшлатăп.

*Ольга АБРОСИМОВА.*

Тутарстан,
Аксу районĕ,
Кивĕ Саврăш шкулĕ.

ЧР ПУÇЛĂХĔН СТИПЕНДИАЧĔ

## Çĕнтерӳ – çирĕп тĕллевлисемпе



Муркашри Çамрăк техниксен станцине çӳрени кирлĕ хăнăхусем панине палăртать Алексей Кудряшов. Нумай çĕннине пĕлет вăл кунта, ăмăртусене хутшăнса хисепе те тивĕçет. Тĕслĕхрен, виçĕм çул арçын ача Мускаври Наукăпа практика конференцине хутшăннă. Унта вăл Г-29 планер модельне хӳтĕленĕ, ятарлă терминсене тĕплĕн ăнлантарса панă.

– Çавăн чухне Мускавра пĕрремĕш хут пулса куртăм. Çĕршывăмăрăн тĕп хули кăмăла кайрĕ. Космонавтика музейĕнче çӳрени те яланлăха асра юлчĕ.

Пĕлтĕр вара Алеша авиамоделировани ăмăртăвĕнче пулнă, пысăк ăсталăх кăтартса мала тухнă. Тăваттăмĕш класрах çак енĕпе кăсăкланни ахаль мар-çке. Эппин, арçын ачан пултарулăхĕ те, тăрăшулăхĕ те, ăсталăхĕ те пурах.

– Тин кăна çӳреме пуçласан авиамоделировани маншăн йывăртарахчĕ. Ирина Валерьяновна Киршева вĕрентекен пĕтĕмпех вĕрентсе, хавхалантарса пычĕ. Вăл хистенипе, ертсе пынипе чылай конференцие хутшăнса Хисеп хутне тивĕçрĕм, – тет маттур вĕренекен.

Алеша спортра пысăк çитĕнӳсем тăвать. Уйрăмах бокс енĕпе унăн пуласлăхĕ пысăк. Çулсеренех ăмăртусенчен медальпе таврăнать. Пĕлтĕр Лысково хулинчи кĕрешӳре пĕрремĕш вырăна тухнă. Тренерĕ, Сергей Васильевич Черкашин, тата çывăх çыннисем хавхалантарни арçын ачашăн темрен паха. Ялан çĕнтерӳ патне ăнтăлни пурнăçра çирĕп тĕллевлĕ пулма вĕрентет тата сывлăхшăн лайăх имĕш. Сирĕн тусем хушшинче те çавăн пек ачасем пулсан эсир мĕн тери телейлĕ вĕт! Алексей шухăшĕпе вара, чăн-чăн юлташăн ырă, шанчăклă, кăмăллă пулмалла. Енчен те тусĕ шутсăр кахал пулсан та ăна пурпĕрех ĕçе явăçтарĕ вăл, пурнăçра хăйĕн çулне тупма пулăшĕ.

Пур çĕрте те хастарлăхпа палăрнăшăн, малтисен ретĕнче пырса тăван шкул, район тата республика чысне хӳтĕленĕшĕн Алеша кăçал ЧР Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ.

– Стипендиллĕ пулас тесен пысăк тăрăшулăх кирлĕ. Пурне те лайăх вĕренме, конкурссене хутшăнса çĕнтерме сунатăп, – тет Алексей Кудряшов хăйĕн ертӳçине, Ирина Валерьяновна Киршевăна, хаçат урлă тав сăмахĕ калана май.

Кахалланса ларсан, паллах, çакăн пек çитĕнӳ тăваймăн. Апла эсир те, ачасем, тантăшăр сĕнĕвне шута илсе яланах çĕнтерӳ патне талпăнăр.

*Лариса ПЕТРОВА.*

Муркаш районĕ,
Юнкă шкулĕ.

# Тĕрлĕ профессире тăрăшакансене пĕрлештерекен уяв





## Раççей киновĕн кунĕ

Уява паллă тумалли указ 1980 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче тухнă. Ăна «Совет киновĕн кунĕ» ят панă. Каярах, 1988 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче уява «Кино кунĕ» тесе улăштарнă. 2006 çулхи майăн 31-мĕшĕнче вара вăл «Раççей киновĕн кунĕ» ята илнĕ.

Раççей кинематографисчĕсен союзĕн пуçлăхĕ Никита Сергеевич Михалков асăннă уява сентябрĕн юлашки эрнекунĕнче паллă тума сĕннĕ. Шăп çав вăхăтра çулсерен наградăлакан «Ылтăн ăмăрткайăк» Кинематографи искусствисен тата наукисен Раççей наци академийĕн премийĕн чыславĕ иртнĕ. Анчах влаç çыннисем ку сĕнĕве йышăнман. Раççей киновĕн кунне августăн 27-мĕшĕнче паллă тума çирĕплетнĕ.

Фотопленкăпа усă курса ӳкерчĕке хускалнă пек кăтартакан пуçласа Томас Эдисон пулнă. Вăл тата унăн ĕçтешĕ Уильям Дикинсон ӳкернĕ кадрсене пăхмалли аппарат – «кинетограф», «кинетоскоп» шухăшласа кăларнă. Эдисон кинетографĕ тĕрлĕ аппаратăн ăнăçлă пĕрлешĕвĕнчен тăнă, ăна чарăнуллă хусканусен механизмĕпе тивĕçтернĕ. Ку камерăна та малтанхисем пекех ятарлă тыткăчпа хускатнă. Унтанпа çĕр çул ытла иртнĕ пулсан та кинокамера витĕр пленка кăлармалли механизм пачах улшăнман тесен те юрать.

Пĕр-пĕр пулăма, хусканăва пурнăçри пек кăтартса ӳкермешкĕн Дикинсонăн пленкăна кинетограф витĕр çеккунтра 40 кадр кăларма тивнĕ. Сасăсăр кино ӳкерме пуçласан камерăсем çеккунтра 16 кадр хăвăртлăхпа çеç ĕçленĕ. Хальхи камерăсем вара çеккунтра 24 кадр кăлараççĕ.

«Кино» сăмах грек чĕлхинчен куçарсан «хускану», «хусканатăп» тесе куçать. Кино никĕслевçи – Францири Люмьер пĕртăвансем. Хăйсем шухăшласа кăларнă «Синематограф» аппаратшăн патент илнĕскерсем. Март уйăхĕнче вĕсем çывăх тусĕсене хăйсен пĕрремĕш кĕске кинокартинине – «Люмьер заводĕнчен рабочисем тухаççĕ» – кăтартнă. Декабрьте вара Капуцинов бульварĕнче «Ла Сьота вокзалне поезд килни» фильма халăх умне тăратнă.

## Историрен

Пирĕн çĕршывра кăтартнă пĕрремĕш фильм – «Понизовая вольница». Вăл 1908 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнче тухнă. Режиссерĕ – Владимир Ромашков. Сюжетăн никĕсне «Из-за острова на стержень» Стенька Разин пирки калакан паллă вырăс халăх юррине кĕртнĕ. Кинофильм çичĕ минут çеç пынă, шурă-хура тĕслĕ пулнă.

Тĕрлĕ тĕслĕ кинолента экрансем çине 1925 çулта тухнă. Вăл – «Потемкин броненосец». Режиссерĕ Сергей Эйзенштейн пулнă.

1934 çулта Васильев пĕртăвансем «Чапаев» фильма халăх умне тăратнă. Совет халăхĕ ăна хапăл туса йышăннă.

1935 çулта Мускавра пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш кинофестиваль иртнĕ. Пуçласа вăл премие «Чапаев» фильма хатĕрлекенсем тивĕçнĕ.

Совет союзĕнче кинематографие пысăк пĕлтерĕш уйăрнă. Влаçра ĕçлекенсем кинофильмсем халăха идеологиллĕ воспитани паракан лайăх меслет тесе шутланă.

## Хальхи вăхăтра

Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра фильмсене илемлĕ, ăслăлăх, документлă, публицистика жанрсенче ӳкереççĕ. Мускавра çулсерен пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль иртет. Унта кашнинчех паллă актерсемпе режиссерсем йышлăн пухăнаççĕ.

Раççей кинофильмĕсем Канны хулинче иртекен «Ылтăн пальма турачĕ» кинофестивалĕн номинанчĕ ята та пĕрре мар тивĕçнĕ. Чи паллă, пысăк пĕлтерĕшлĕ кинофестиваль вара Америкăра иртекен «Оскар».

Раççей киновĕн кунĕ çак ĕçре тăрăшакансене пурне те пĕрлештерет. Вăл актерсен, режиссерсен, сценаристсен, операторсен, гримерсен тата ыттисен чăн-чăн уявĕ. Çулсеренех ăна халалласа киноиндустрипе çыхăннă тĕрлĕ мероприяти ирттереççĕ.

Кино ытти искусство тĕсĕсенчен çамрăкрах пулсан та хальхи вăхăтра вăл анлă сарăлнă искусство тĕсĕ шутланать. Унăн çĕкленĕвĕ уйрăмах Совет Союзĕ вăхăтĕнче пулнă. Унтанпа чылай вăхăт иртсен те çав кинофильмсене куракансем халĕ те пăхма кăмăллаççĕ.

Хальхи вăхăтра Раççей кинематографийĕнче çĕнĕ ятсем усăлаççĕ, талантлă çамрăк авторсем те йышлăн пăлăраççĕ.

Пирĕн çĕршывра хĕрĕхе яхăн киностуди. Вĕсенчен чи пысăккисем «Мосфильм», «Ленфильм» М. Горький ячĕллĕ киностуди. Унта çулсеренех çĕре яхăн фильм ӳкерĕнет.

Малашне пирĕн кинофильмсем тĕнчипе паллă пуласса, вĕсем çĕнĕ шая тухасса шансах тăратпăр. Пурне те уяв ячĕпе саламлатпăр, илемлĕ те кăмăллă киносем çеç пăхса савăнма сунатпăр!

## ÇИВĔЧ СĂМАХ

# «Паянхи йывăр социаллă вăхăтра ача-пăчана çутăрах фильмсем кирлĕ»

**Андрей ВАСИЛЬЕВ – Чăваш Енри пĕрремĕш цифрăллă кинотеатр фильмĕн /«Нарспи»/ режиссерĕ, Шупашкарта иртнĕ пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль дипломне тата жюрин ятарлă парнине тивĕçекенĕ, кинофестивальсен йĕркелӳçи, кинокритик, "Premium art" киностуди ертӳçи. Раççей кинематографĕн аталанăвĕпе кăсăкланать, паянхи лару-тăрăва ăнланать.**



– Кино ӳкерес тесен яланах май пур. Профессионалсем мар, çак ĕçе тин кăна пуçăнакансем ăнăçлă фильм ӳкернĕ тĕслĕх сахал мар пĕлетĕп. Сăмахран, Андрей Петрович Звягинцев тата унăн «Возвращение» фильмĕ тĕнчипе вун-вун наградăна тивĕçнĕ. Анчах вăл та, унăн операторĕ Михаил Кричман та çак ĕçсене ятарласа вĕренмен. Чăваш Енре Звягинцев, Клаус Хаяре, Асгар Фархади тата автор фильмĕпе ĕçлекен ытти режиссер çинчен пĕлекен сахал. Пирĕн кино туйăмĕ çук, кинофестиваль вара пур. Республикăна пĕтĕм тĕнчери А класлă кинофестивале кăларма пултаракан режиссерсем çук, анчах ӳркенмен кирек хăш çын та кино ӳкереет. Сăмах май, ача-пăча фильмĕсем те хатĕрлеççĕ. Ку маншăн питĕ тĕлĕнмелле. Ача-пăча киновĕ вăл – пач уйрăм искусство. Аслă çыннăн ачана тыткăнлакан фильм ӳкермелле, ку питĕ йывăр. Режиссерăн çĕр, пин ачашăн шухăшлама пĕлмелле. Автор киновĕнче вăл хăйĕн шухăшне тĕпе хурать пулсан, ача-пăча киновĕнче кун пек май çук. Халĕ аслисене те лайăх автор фильмĕпе илĕртме йывăртарах, ачасене – пушшех те. Паянхи йывăр социаллă вăхăтра вара ача-пăчана çутăрах фильмсем кирлĕ, вĕсем çитĕнекен ăру ăс-тăнĕнче мĕн те пулин хăварччăр, тĕнчене урăхларах курма май парччăр.

Хăй вăхăтĕнче эпĕ Çĕнĕ Шупашкарти 18-мĕш лицейре икĕ хутчен ача-пăча кинофестивалĕ ирттернĕччĕ. Ачасем курнă фильмсене мĕнле хаклани мана пысăк савăнăç кӳчĕ. «Кино çапла пулма пултарать тесе нихăçан та шухăшламан…», «Урăх нимĕнле терминатор та, дровосек та, трансформер та кирлĕ мар…» – тесе çырнăччĕ вĕсем.

Чăвашла ача-пăча киновĕ çинчен вара калаçмăпăр та. Мĕншĕн тесен вăл çук. Эсир чăвашла фильмсем курнă-и? Вĕсене пăхма та май çук вĕт. Çав фильмсене пула пирĕн «режиссерсем» республикăра пурăнакансен кино туйăмне тĕрĕс аталантараймаççĕ. Ку вара питĕ япăх. Чăваш Енре кинематограф çук. Кунта «фильм ӳкерекенсем» хăйсен пултарулăхне кирек мĕнле ят пама пултараççĕ, анчах вăл кино мар. Ку пĕр манăн шухăш çеç.

Ахальтен мар нумаях пулмасть иртнĕ пĕтĕм тĕнчери «Окно в Европу» кинофестивальте жюрире ларакансемпе пĕрле вĕсен председателĕ Светлана Проскурина пĕр шухăшлăн пулса пĕр фильм та тĕп парнене тивĕçейменнине пĕлтерчĕç. Вĕсене пĕрин хыççăн теприне пăхсан депрессие кĕрсе ӳкме е ăсран тайăлма та пулать. Ачасен ун пеккине пачах та пăхма юрамасть. Ку питĕ хурлăхлă. Пирĕн Раççейри кино, тĕпрен илсен, çурма пулса çитнĕскер кăна. Халĕ никам та Тарковскипе, Сокуровпа, Бергманпа, Антониониპе танлашаймасть. Никам та. Кашниех хăйĕншĕн чаплă режиссер. Иккĕмĕш сортлă кино тата пĕрре те ачалла мар ача-пăча киновĕсем тăвакан «режиссерсем» хамăр çĕршыв киновне хавшатаççĕ кăна. Пирĕн вара çакăнтан асăрханма ăнтăлмалла.

Хамăр чăваш режиссерĕсен темиçе картинине курма тӳр килчĕ. Вĕсене мĕнле ӳкернине, актерсене епле «тĕплĕн» шыранине, сценарине çырнине куç умне кăларма тăрăшрăм. Текех чăвашла фильм курас кăмăл çук. Ача-пăча валли чăвашла кино ӳкересси çинчен те калаçма иртерехха. Хамăр режиссерсене киноидейипе тĕллевĕ çинчен шухăша кайма чĕнсе калаятăп çеç. Хăвăр мĕн тата кам валли ӳкерни çинчен шухăшлăр.

Сăмаха вĕçленĕ май, тĕнче кинематографĕшĕн нумай ĕçленĕ Чарли Чаплин каланине аса илтерес килет: «Пур пĕрех чĕлхесĕр кинона шел. Хĕрарăм çаварне уçсан та сасси илтĕнменни мĕн тери кăмăллăччĕ!»

*Страницăна Нина ЦАРЫГИНĂПА Лариса ПЕТРОВА (56-11-80) хатĕрленĕ.*

**Кино – пурнăçа евĕрлени, пурнăç вара – кино евĕрлевĕ. (Олег Рой)**

Тантăш
35 №, 2015, август, 27 

АСАМЛĂХ

# Юмахçă ĕмĕчĕ

*(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 34-мĕш номерте).*



...Ырă мара каçранах сисрĕ Юмахçă. Ашшĕпе амăшĕ тĕпренчĕкĕсене хĕвел аннă-анманах çывăрма вырттарчĕç, кĕнекене çÿлĕк çинчен те илмерĕç. Ачасем кутăнлашрĕç, Юмахçа чĕнчĕç. Тулĕк аслисем итлемерĕç вĕсене.

– Ыран ирех тăмалла. Ĕç нумай. Çывăрăр, – терĕç те хăйсен пÿлĕмĕнче çухалчĕç.

Пĕчĕк тусĕсене частарах лăплантарма тутлă тĕлĕксене йыхăрмалли çеç юлчĕ Юмахçăн. Çапла турĕ те вăл.

Çемье илĕм-тилĕмех çĕкленчĕ. Хĕвелтухăç та хĕрелейменччĕ-ха. Витери кашта çинчи автан та кăшкăрма ĕлкĕрейменччĕ, çунаттисене çеç çатлаттаратчĕ. Кил хуçипе мăшăрĕ япаласене хăпăл-хапăл пуçтарма пикенчĕç.

– Чи кирлине çеç илетпĕр. Ыттисене вырăна çитсен туянăпăр. Ăптăр-каптăра мачча тăррине хăпартса хурăпăр, – канашларĕç вĕсем.

Упăшкипе арăмĕн калаçăвĕнчен çакна ăнланчĕ Юмахçă: çемье çĕнĕ çĕре, хулана, куçса каять-мĕн. Çĕнĕ пурнăçа кивĕ япаласемпе пуçлас килменнипе вĕсене ялтах хăварма шут тытнă апăршасем. Унсăрăн çитмен пурнăç хыççăнах йĕрлесе пырать тет.

«Чи кирли» висĕ чăматана вырнаçрĕ. Шел, вĕсенчен пĕринче те Юмахçă валли вырăн тупăнмарĕ. Мачча тăррине вăркăнтарчĕç ăна. Юрать-ха, пĕччен марччĕ вăл. Унашкал хурлăхлă шăпалли тата та пурччĕ: апат-çимĕç хатĕрлеме вĕрентекен кĕнеке – Айтутлă.

Кил хуçисен чăматанĕсенче Пăçукка валли те вырăн тупăнмарĕ курăнать. Ăна та ялтах хăварчĕç.

– Хуçалăха тимлĕ сыхла. Вăрăхураха ан иртĕнтер! – тесе хушрĕçха тата çиелтен.

Пăçукка куççульне тытса чараймарĕ. Анчах çынсем кушаксем макăрнине хăçан ăнланнă? Юмахçă астăвасса – пулман кун пекки. Мăрмăрсем йĕнине ахаль майлани вырăнне çеç хурать этем.

Çапла «тăлăха юлчĕç» Юмахçăпа Айтутлă тата Пăçукка. Мачча тăрринче кунĕн-çĕрĕн тĕттĕмччĕ. Хĕвел ялкăшнине, тÿпере çăлтăрсем куç хупмалла вылянине кушак каланиненчен çеç пĕлетчĕç кĕнекесем. Пăçукка ятарлă шăтăкран урама тухса çÿреетчĕ. Çумăр çунине кăна пит аван туятчĕç Юмахçăпа Айтутлă. Тумламсем пÿрт тăррине такăртаттарнине тунсăхлăн итлесе выртатчĕç.

– Эх, юмах яма та мантăм пуль ĕнтĕ, – тетчĕ кун пек чухне Юмахçă ассăн сывласа.

– Эх, апат пĕçерме те мантăм ахăртнех, – тетчĕ Айтутлă нăшăклатса.

Çапах Пăçуккапа чухне вĕсен пурнăçĕ хаваслăччĕ те хăйне евĕрлĕ интереслĕччĕ. Кушак ялти хыпарсене пĕлтерсе тăратчĕ, хăйĕнпе пулса иртнĕ пăтăрмахсене каласа паратчĕ. Унтан та пĕлтерĕшлĕреххи – кĕнекесем çине ларнă тусана кăпăшка хÿрипе шăлса перетчĕ, вĕсене тапăнма тăнă хапсăнчăк та выçă шăшисене кап! çулса тытатчĕ, хут çиме юратакан мăн кăмăллă та çăткăн хуртсене тĕп тăватчĕ.

Хÿтлĕхреччĕ Юмахçăпа Айтутлă. Анчах пур япалан-пулăмăн та вĕçĕ пур çав. Пăçукка та кун-çулĕн вĕçне тухрĕ. Кушаксен тăхăр пурнăç пулин те, вĕсем те иксĕлеççĕ. Тăххăрмĕшĕ катăлсан Çĕр çине тек таврăнмарĕ Пăçукка. Кĕнекесем иккĕнех тăрса юлчĕç. Тусан çăтса чыхăнма та, шăшисене хирĕç тăма та, хуртсем тапăннине тÿсме те тиврĕ туссен. Шел те, хÿтĕлекен тупăнмарĕ.

Айтутлăна пушшех йывăрччĕ. Сăтăрçăсем унран хăпма пĕлместчĕç. Пĕр кунхине вара юлташне ĕмĕрлĕхех çухатрĕ Юмахçă. Витререн чашлаттарнă пек çумăр лÿшкетчĕ уй чухне. Тасти мур тĕпĕнчен шăшисен эшкерĕ кĕпĕрленсе çитрĕ. Выçăскерсем Айтутлăна тапăнчĕç те:

– Ай тутлă! Кун пек паха кĕнеке активсе курманччĕ халиччен! – тесе тĕппипе туртса çурчĕç.

Юлашки хут таткисене кайран хуртсем сĕтĕрсе кайрĕç.

Юмахçа та çавнашкал синкерлĕ шăпа кĕтетчĕ-тĕр. Тулĕк хулăн хуплашкана кăшласа витереймерĕç тĕпсĕр пырсем. Çулсем иртнĕçем кĕнеке вăхăт тусанĕпе витĕнчĕ, тавралли япаласем хушшинче курăнмиех пулчĕ. Халĕ ăна шăшисем те, хуртсем те асăрхамарĕç ĕнтĕ. Ыйха путрĕ Юмахçă. Хушăран, вăрансассăн, кил хуçисемпе ачисене, Пăçуккапа Айтутлăна аса илкелерĕ. Ку асаилÿсем хурлăх авăрне туртнипе каллех ыйхă тĕнчинче çăлăнăç шырарĕ. Пурпĕр ĕмĕтленме пăрахмарĕ – хăçан та пулин хăтăлĕ вăл çак тыткăнран, унчченхи пек тулли пурнăçпа киленме пуçлĕ.

Мĕне те пулин хытă-хытă кĕтсессĕн, вăл пурнăçланассинче иккĕленмесессĕн ĕмĕт чăнлăха çаврăнать тет. Чăнах та, чăнах та!.. Шанăç çути кирек мĕнле тĕксĕм пурнăçа та çутатать.

* * *

...Пÿртри кĕмсĕр-кемсĕр, хăлтăр-халтăр сасăпа вăранчĕ Юмахçă. Тÿрех тăна кĕреймерĕ-ха. «Мĕн пулнă ара? Аслати авăтать-ши?» – шухăшларĕ вăл. Каштахран ача-пăча кулли, çитĕннисем калаçни хăлхине кĕчĕ. «Тĕлĕк куратăп иккен. Каллех аташатăп», – пĕтĕмлетрĕ кĕнеке. Вăранас тесе страницăсемпе чăштăртатса илчĕ, анчах сасăсем тамалмарĕç.

Сасартăк алăк яри уçăлчĕ те чăлана, мачча тăрринелле çутă парйăрки вирхĕнсе кĕчĕ. Чарусăр шевле йăлт-ялт сиккелерĕ, Юмахçа та куç хĕсрĕ. Кĕнеке вăтаннине пуçне пĕкрĕ. Мачча тăррине улăхакан пусма çинче ура сассисем илтĕнчĕç. Тĕпĕр-тĕпĕр вĕлтĕртетсе хăпарчĕ пĕчĕк арçын ача. Кĕтесре тем çутатнине тÿрех асăрхарĕ вăл. Шевле шăпах Юмахçă хуплашки çинчи ылтăн сас паллисемпе выляма пуçланăччĕ. Йăлтăртатакан, ĕлккен япаласене кăмăллать çав вăл. Лешсем те ăна килĕштереççĕ – хĕпĕртенипе тата илемлĕрех пулса каяççĕ.

Хăй патне алă тăсăлнине курсан пит хумханчĕ Юмахçă. Хăçантанпа кĕтнĕ вăл çак саманта! Арçын ача асăрханса, хуллен тытрĕ кĕнекене. Типтерлĕн тусанран шăлса тасатрĕ. Ылтăн сас паллисем асамат кĕперĕ пек çич тĕслĕн йăлтăртатрĕç. Хуплашкана, страницăсене ерипен, васкамасăр уçрĕ ача. Тĕлĕннипе те савăннипе тути йăл кулчĕ, куçĕ çăлтăр пек çуталчĕ.

– Анне, пăх-ха, мĕнле чаплă кĕнеке тупрăм эпĕ! – терĕ арçын ача.

Ывăлĕн сассине илтсе амăшĕ те çитрĕ. Вăл та тыткаласа пăхрĕ кĕнекене.

– Чăнах та, чаплă-çке. Кивĕ пулин те, паянхи кунччен чип-чипер упранса юлайнă. Вăт ку тĕлĕнтермĕш! – терĕ амăшĕ пуçне пăркаласа. – Атя пÿрте кĕретпĕр, ывăлăм. Кунта ытла тусанлă. Кĕнекÿне ил. Унăн вырăнĕ мачча тăрринче мар.

Шăкăл-шăкăл калаçса картлашкапа анчĕç амăшĕпе ывăлĕ. Арçын ача кăкăрĕ çумне юмах кĕнекине пăчăртанă. Юмахçă паян нихçанхинчен те телейлĕрех. Савăнăç хакне тин пĕлчĕ-çке-ха вăл. Лăпкă пурнăçпа киленнĕ хушăра хăй еплерех ăраскаллă пулнине ăнкарайман. Йăлт çухатсан тин çывхарчĕç ун патне ăнланупа сĕмленÿ. Паян акă тинех ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ: вăл хăй вулаканне тĕл пулчĕ. Хурлăхпа инкек витĕр туптаннă телее мĕнпе виçейĕн-ха, мĕнпе танлаштарайăн?

Çапла, ачасем, кĕнекесене вулавçăсемсĕр питĕ йывăр. Çавăнпа та пĕчченлĕхре ан хăварăр вĕсене. Кĕнеке – чăн-чăн тус. Юлташсене вара сутмаççĕ.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# «Шăнкăрав хыççăнхи уроксенче»

## мĕне вĕрентеççĕ?

**Кĕçех çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланать. Ачасем ăна пĕр хумханса та пĕр шикленсе кĕтеççĕ. Ара, çу каçиччен тантăшсемшĕн тунсăхласа çитнĕ-çкеха, пĕр-пĕрне курса юмахлас килет. Каласа кăтартмалли темĕн чухлех пухăннă: портфеле те вырнаçаяс çук. Анчах кунсерен уроксем тăвасси, тĕрĕслев ĕçĕсем çырасси кăшт хăраткалать. Çавăнпа та каникула кăшт та пулин тăсас килет.**

Нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче 1000 экземплярлă тиражпа Николай Ишентейĕн «Шăнкăрав хыççăнхи уроксем» кĕнеки /редакторĕ – Ольга Иванова, ÿнерçи – Иван Алексеев/ кун çути курчĕ. Унта пĕр повесть /«Шăнкăрав хыççăнхи уроксем»/ тата вун çичĕ калав /«Лĕпĕш – илĕртÿллĕ финиш», «Çĕнтерÿ палли», «Ырă туни – кил илемĕ», «Путене юрри», «Тĕрĕс мар задача» тата ытти те/ кĕнĕ.

Ку калăрăм вĕренекенсемшĕн – Пĕлÿ кунĕ умĕнхи чăн-чăн уяв парни. Паянхи шкул ачин пурнăçне çутатса паракан хайлавсем питех те сахал-çке. Арçын ачасемпе хĕр пĕрчисем вара хăйсем çинчен вуласшăн. Николай Петрович ку тĕлĕшпе çитĕнекен ăру кăмăл-сунăмне пит аван туять: ансат та илемлĕ чĕлхепе çырать, кăсăклă самантсене суйласа илет, сăнарсене ăста калăплать. Çавăнпа та унăн кашни кĕнекине чăтăмсăррăн кĕтеççĕ вулакансем.

«Шăнкăрав хыççăнхи уроксем» повеçре тĕп геройсем – вуннăмĕш класра ăс пухакан Петя Масмаков, Женя Чармаскин тата Дима Баторшин. Хăйсен умне пысăк тĕллевсем лартаççĕ вĕсем: вĕренÿ ĕçне вăйлатасси, шкул ачисене Этем правине пăхăнма тата тĕрлĕ пăтăрмахран хăтăлса тухма хăнăхтарасси. Палăртнине пурнăçа кĕртме çăмăлах пулмĕ. Апла пулин те яшсем пуç усмаççĕ. Чăх пĕчĕккĕн сăхсах тăранать тет. Уйрăлми туссем те хăйсем палăртнă çул-йĕртен пăрăнмасăр шав малалла талпăнаççĕ, ан тив, сулмаклăн мар пулин те. Ÿсĕмĕ пурпĕр куçкĕрет.

Повеçпе вĕрентекенсем те интересленсех паллашĕç. Вĕсен те хăйсем çине айккинчен пăхас, ачасем мĕн шухăшланине пĕлес килетĕр. Сăмахран, «Мĕншĕнне калаймастăп, анчах маншăн Макар Макарович чуна çывăх вĕрентекен мар. Урокра та, переменăра та вăл хĕр ачасене куç хĕскелесе асăрханă эпĕ…» – тет Петя Масмаков.

Калавсенче хускатнă темăсен анлăшĕ те савăнтарать: çитĕннисемпе кĕçĕннисем пĕр чĕлхе тупни, туслăхпа ĕçченлĕх, илеме асăрхама пултарни, сывă пурнăç йĕркине пăхăнни, тавçăрулăха аталантарни, нумай пĕлме ăнтăлни…

Сăмахăма кĕнекери йĕркесемпех вĕçлес килет: «Эпир кайсан та ыттисем – çынлăх шайне çĕкленен çăлтăрсем – пурнăç тÿпемне улăхăр. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн… Картлашкан-картлашкан… Çуллен çул, класран класа çапла çĕкленсе пырсан иккĕленмелли çук: пирĕн Çĕр планета çинче те этем правине пăсакансем сахалланĕç. Чăн сăмах, пирĕн хыççăн килекенсем пирĕнтен аслăрах та ăслăрах пулччăр. Ырăрах та…»

*Страницăна*
***Ольга АВСТРИЙСКАЯ***
*хатĕрленĕ.*

**Кĕнекесĕр кил-çурт пурнăçĕ хĕвелсĕр кун пекех.**

# Сӗтел ҫинче ялан ҫӑкӑр пултӑрччӗ



Ленинград блокади вӑхӑтӗнче чылай ачана эвакуациленӗ. Хулара ашшӗ-амӑшӗсӗр хӑр тӑлӑха юлнисем валли вара тӗрлӗ приют уҫнӑ. Мӗн май килнине аслисем ачасене пама тӑрӑшнӑ...

Ир-ирех 165-мӗш номерлӗ ача сачӗ ҫине нимӗҫсем пӑшалтан пеме тытӑннӑ. Ача сачӗн ертӳҫи Лидия Дмитриевна Голуткина ҫухалса кайман, хӑвӑрт ҫеҫ санитаркӑпа воспитательницӑна чӗнсе пепкесене ҫӑлма васканӑ. Утиял ҫине темиҫе арҫын ачапа хӗрачана хурса урамалла йӑтса тухнӑ. Снаряд ванчӑкӗсем чӳрече рамисене тулалла кӑларса пӑрахнӑ, пӳлӗмри япаласене юрӑхсӑра кӑларнӑ. Ҫапах ача сачӗн ӗҫченӗсем пур ачан пурнӑҫне ҫӑлса хӑварма пултарнӑ. Инкек хыҫҫӑн воспитательница шӑпӑрлансене хӑй килне илсе кайнӑ. Ҫурт патне ҫывхарсан ӑна вут тивнине курнӑ та чуна ыраттармалла кӑшкӑрса янӑ.

– Унта манӑн виҫӗ тӗпренчӗ-ӗ-ӗк! Пушарта вилеҫҫӗ вӗсе-е-ем! – тесе хӳхленӗ.

Ҫын нушине ӑнланакансем тупӑннӑ ҫав самантра, вута кӗрсе воспитательницӑн ачисене илсе тухнӑ.

– Ӗҫтешсемпе 170 ача пурнӑҫне ҫӑлтӑмӑр, хамӑн виҫӗ тӗпренчӗке вара пушартан кӳршӗсемех туртса кӑларчӗҫ. Эх, хӑҫан пӗтӗҫ-ши ку хӑрушӑ кунсем! – тесе ӗсӗкленӗ хӗрарӑм пепкисене ыталаса.

1942 ҫулхи февралӗн 24-мӗшӗ. 38-мӗш номерлӗ ача ҫурчӗ хута кайнӑ. Ҫӗр ача пуҫтарӑннӑ унта. Хӗрачасемпе арҫын ачасем вара ҫав тери тунсӑхлӑ ҫӳренӗ. Пурте кӑмака ҫумне тӗршӗннӗ. Ӑшӑнас тесе. Вӗсем ҫакӑн пек пӗр вырӑнта хускалми темиҫе сехет ларма пултарнӑ. Пӳлӗмре хаваслӑрах пултӑр тесе воспитательсем юрӑ янӑ, анчах ачасене вӑл килӗшмен. Аслисем ҫине сиввӗн пӑхса вӗчӗрхеннӗ. Кам та пулин кулсан – каллех тарӑхнӑ пӗчӗккисем. Уйрӑмах пиллӗкри Лера кун пеккисене чӑтма пултарайман.

– Мӗншӗн питӗ тунсӑхлӑ эсӗ? – ыйтнӑ унран воспитательсем.

– Паянхи куншӑн мӗншӗн савӑнмалла? Вӑрҫӑ пырать-ҫке. Выҫлӑх та хуҫаланать. Мӗн чухлӗ ҫын вилет, – хуравланӑ пиллӗкри ача мӑн ҫын евӗр ассӑн сывласа.

Пӳлӗмре янӑракан хитре кӗвӗ, урайӗнче выртакан ҫӗнӗ теттесем, тӗрлӗ шав ачасене тарӑхтарнине ӑнланса илнӗ приют ӗҫченӗсем. Вӗсене вӑрҫӑ ир ҫитӗнтернине хӑйсем курса ӗненнӗ. Ачасем тӗрлӗ ҫемьерен пулнӑран пӗр-пӗрин хушшинче час-час ӑнланманлӑх сиксе тухнӑ. Акӑ Коля тенкелне илсе кӗтессе ларасшӑн пулнӑ, анчах сӗтел патӗнче тӑракан Витя сӑлтавсӑрах хыттӑн макӑрса янӑ.

– Килтех аванччӗ, – тенӗ ӗсӗклесе.

## Юратнӑ аннем куҫ умӗнчех

Пиллӗкри Эмма та ларнӑ ҫӗртех ӗсӗкленӗ.

– Мӗн пулчӗ? – чупса пынӑ ун патне воспитательсем.

Хӗрача пӗр сӑмах та чӗнмен, пушшех макӑрнӑ. Куҫӗсем хӗреличченех. Иккен унӑн пушмак кантрисене салтма вӑйӗ пулман. Ҫавӑнпа хурланнӑ. Хӑй ҫапах никамран пулӑшу ыйтманни аслисене тӗлӗнтернӗ.

Ачасене мунча кӗртесси те тертлӗ пулнӑ. Куҫҫуль витӗр макӑрашнӑ, суйма хӑтланнӑ хайхисем.

– Унта шывӗ сивӗ-ӗ-ӗ! – тенӗ пӗри хурланса.

– Манӑн мунча кӗрес килмест! Эпӗ таса, нумай пулмасть анне ҫӑвӑнтарнӑччӗ! – хирӗҫленӗ Валя.

– Кирлӗ мар! Ҫӑвӑнмастӑп! Супӑньрен хӑратӑп! – кӑшкӑрнӑ Коля.

– Сивӗ мана! Кӗместӗп мунчана! – турткалашнӑ Ваня.

Вӗсем епле апатланнине пӑхма та йывӑр пулнӑ. Васкамасӑр ҫинӗ вӗсем чашӑкри яшкана. Малтан шӳрпине, унтан ҫӗрулми турамӗсене ҫинӗ. Юлашкинчен ҫӑкӑр татӑкне алла илнӗ. Ӑна вӗсем малтан ун-кун ҫавӑркаласа пӑхнӑ, сӑмси патне тытса шӑршланӑ. Унтан чи тутлӑ апат вырӑнне хурса чӗпӗте-чӗпӗте ҫинӗ. Сӗтел ҫинчи тӗпренчӗксене шӑрпӑк курупки ҫине типтерлӗн пуҫтарнӑ.

Лерочка хӑй пайне нихӑҫан та ҫисе ярайман, ҫаплах сӗтел ҫине лартса хӑварнӑ е ыттисене панӑ. Пӗррехинче вара ҫӑкӑра пытарса хунӑ.

– Пӗлетӗп, капла хӑтланма юраманнине... Урӑх пулмасть кун пекки, сӑмах паратӑп. Анне аса илтӗм-ҫке... Юратнӑ аннем куҫ умне тухрӗ. Эпир унччен каҫхине вырӑн ҫинче ҫӑкӑр ҫиеттӗмӗр унпа. Эпӗ те паян ҫӑкӑра вырӑн ҫинче ҫиес терӗм... Аннене питӗ юрататӑп. Унсӑр тунсӑхлатӑп, – тенӗ куҫҫуль витӗр чӗтренсе.

Хӗрача ача ҫуртне амӑшӗ вилсен тепӗр икӗ кун иртсен килнӗ. Хурлӑхлӑ ҫӳренӗ яланах, анчах воспитательсен сӑмахӗсенчен нихӑҫан та иртмен. Яланах амӑшӗ ҫинчен шухӑшласа ҫӳренипе хӑш чухне апат ҫинчен те маннӑ вӑл.

Пӗр кунхине воспитательница мунчара Лерӑн мӑй ҫинчи медальона асӑрханӑ.

– Унччен хывса хур, тимӗр япала ӳте пӗҫертет, – асӑрхаттарнӑ хӗрачана вӑл.

Хӗрача ун ҫине шӑтарасла пӑхнӑ.

– Ҫу-у-ук! Хывсан ӑҫта хумалла ӑна? Ҫухалать вӗт... Аннен пулнӑ вӑл, халӗ манра. Ӗмӗрӗпех упрӑп ӑна. Ҫухатсассӑн хама нихӑҫан та каҫарас ҫук, – тенӗ вӑл ҫирӗппӗн.

Ҫак калаҫу хыҫҫӑн вӑл амӑшӗпе тӑванӗсем епле вилнине тӗпӗ-йӗрӗпе каласа кӑтартнӑ.

– Пурпӗрех анне вилмен пекех туйӑнать мана, – тенӗ те куҫӗ куҫҫульпе тулнӑ.

## Пиччен калпакӗ – ӗмӗрлӗх...

Ҫиччӗри Леня пуҫӗнчи калпакне нихӑҫан та хывасшӑн пулман.

– Капла хӑвна пӑчӑ-ҫке, мӗншӗн ҫывӑрнӑ чухне те хывмастӑн? – кӑсӑкланнӑ аслисем.

Пӗр сӑмах та чӗнмен Леня, унтан хурлӑхлӑн макӑрса янӑ. Кӑштахран хӑйне алла илнӗ, куҫҫульне шӑлса типӗтнӗ те:

– Выҫӑпа вилнӗ пиччен калпакӗ вӑл... Ӑна манӑн нихӑҫан та пуҫран хывас килмест. Хывсан... ҫухалӗ те, вара ӑҫтан тупмалла тет ӑна? Пиччене яланлӑхах ҫухатнӑ пек пулса тухать капла. Халӗ вара хампа пӗрле ҫӳренӗ пек туйӑнать, – тенӗ ача куҫҫульне ҫӑта-ҫӑта. – Тата вӑл ӳкернӗ картинӑсене те типтерлӗ упратӑп. Тунсӑха путсан вӗсене кӑларатӑп та темччен тинкерсе ларатӑп. Эпӗ унӑн ӗҫсене ӗмӗрӗпех упрӑп. Кайран пурнӑҫ ырӑ енне улшӑнсан, вӗсене ятарлӑ сунтӑхра упрӑп. Хам ӳснӗҫемӗн пиччен калпакӗ пӗчӗкленӗ, ӑна вара курӑнакан вырӑна вырнаҫтарӑп.

Улттӑри Женя ача ҫуртне килсен амӑшӗн сӑнӳкерчӗкне кӑтартнӑ та:

– Манӑн анне чи лайӑххи. Мӗн тери лайӑх пурӑнаттӑмӑр, анчах пирӗн телее вӑрҫӑ татрӗ. Ытти-хӑтти пирки вара сире атте каласа кӑтарттӑр, – тенӗ шӑппӑн ҫеҫ.

Каҫсерен арҫын ача час ҫывӑрса каяйман. Маччаналла темччен пӑхса выртнӑ пӗчӗкскер. Тепӗр чухне ача пӑхакана хӑй патне чӗнсе илнӗ.

– Ҫутӑ ҫутсамӑр... Аннешӗн тунсӑхларӑм... Сӑнӳкерчӗкӗ ҫине пӑхса илесчӗ, – тилмӗрнӗ куҫҫуль витӗр. – Кур-ха, виҫҫӗри Вова шӑллӑм епле туттӑн ҫывӑрать. Аннене маннӑ пуль вӑл? Эпӗ унпа юнашар выртам-ха, тен, лайӑхах тӗлӗрсе кайӑп. Ялан анне аса килет мана, ялан. Кашни ҫеккунтра тенӗ пекех. Анчах ҫук-ҫке вӑл пиренпе юнашар, ҫук...

Кӑвак куҫлӑ Аньӑн та амӑшӗ вилнӗ. Ашшӗ вӑрҫӑччен урӑх ҫемьепе пурӑннӑ. Хӗрача патне теплерен пӗрре ҫеҫ пырса кайнӑ вӑл.

– Аннене курас килет, – тесе час-час макӑрнӑ.

Тепӗр чухне пӗчченех ӳкерсе ларма юратнӑ пӗчӗкскер.

– Анне пур чухне иккӗн ӳкереттӗмӗр, халӗ пӗчченех эпӗ, – тесе куляннӑ.

Тирпейлӗскер сӗтел хушшинче ҫӑкӑра тӗпретнине, яшкана тӑкнине питех те кӑмӑлламан.

– Мӗн хӳресӗр автан пек янкӑлтататӑн! Апатланнӑ чухне хӑв ӑҫта ларнине манмалла мар! – тесе самантрах асӑрхаттарнӑ.

## Ывӑлӗсене мӗншӗн ырра вӗрентмен?

Начаркка Эрик... Ырӑ кӑмӑлӗшӗн пурте юратнӑ ӑна. Анчах нимӗнпе те кӑсӑкланман хӑй. Воспитательсен сӑмахӗсене итлесшӗн пулман.

– Манӑн нимӗн те тӑвас кӑмӑл ҫук, – тенӗ те кантӑк патне кайса тӑнӑ.

Пӗр кунхине пуҫӗ таранччен утиялпа витӗннӗ те шӑппӑн ӗсӗкленӗ.

– Кам кӳрентерчӗ? – пырса тӑнӑ ун патне воспитатель.

– Анне аса килчӗ... – тенӗ те пушшех хӳхлеме тытӑннӑ. – Вӑл вилнӗ куна ӗмӗрне те манас ҫук. Ун чухне ир-ирех ҫӑкӑр илме тухса кайрӗ. Каҫ та пулчӗ. Вӑл ҫук та ҫук. Пӳртре сивӗ. Кантӑкран темиҫе хут пӑхсан та анне килни курӑнмарӗ. Каҫхи сакӑр сехетре алӑк уҫӑлса кайрӗ те, анне кӗрсе тӑчӗ. Икӗ-виҫӗ утӑм турӗ ҫеҫ, урайне тӗшӗрӗлсе анчӗ. Хӑвӑртрах шыв ӑсса кӗтӗм те ӑна ӗҫтерес терӗм. Анчах вӑл хускалмарӗ. Аран-аран вырӑн патне сӗтӗрсе ҫитрӗм. Йывӑр пулнӑран ҫӳлелле хӑпартса вырттараймарӑм. Кӳрше пулӑшу ыйтма чупрӑм. «Аннӳ вилнӗ вӗт», – терӗ Анна аппа анне аллине тытса. Унӑн сӑмахӗсем пуҫран чукмарпа ҫапнӑнах туйӑнчӗҫ... Ҫав самантра пӗр куҫҫуль те кӑлармарӑм. Халӗ чӑтаймастӑп, куҫран юхать те юхать тӑварлӑ куҫҫулӗм. Аннепе пурӑннӑ чухнех телейлӗччӗ эпир. Вӑл пире яланах ыррине вӗрентетчӗ. «Аслисемпе кӗҫӗннисене хисеплемелле, ваттисене пулӑшмалла. Ҫынна нихӑҫан та усал тумалла мар», – тетчӗ. Анчах нимӗҫсен амӑшӗсем тӗпренчӗкӗсене мӗншӗн ырра вӗрентмен? Мӗншӗн вӗсем пире хур тӑвассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Юратнӑ хулана бомба тӑкаҫҫӗ ҫеҫ, ним айӑпсӑр ҫынсем ӗмӗрлӗхех куҫӗсене хупаҫҫӗ. Вӗсене пула эпир выҫӑпа аптӑратпӑр, тӑраниччен ҫӑкӑр та ҫисе кураймастпӑр. Унччен пирӗн сӗтел ҫинче печени-канфет та таталмастчӗ... Кӑвакрах куҫлӑ кушак ҫурине те кӳршӗсем вӑрттӑн илсе кайса пӗҫерсе ҫирӗҫ. Е тата каҫсерен вырӑнпа юнашар выртакан пысӑк йытӑ куҫ умӗнчех начарланса вилнишӗн те ирсӗр фашистсем айӑплӑ вӗт! Пӗр сӑмахпа, пирӗн туслӑ ҫемье арканнишӗн нимӗҫсем явап тытаҫҫех. Манӑн пӗрре те пурнӑҫран уйрӑлас килмест. Пурӑнас та пурӑнас килет. Сӗтел ҫинче кашни кун ҫӑкӑр пултӑрччӗ, тӳперен яланах хӗвел пӑхтӑрччӗ. Нимӗҫсен кӑмӑлӗсем ырӑ енне улшӑнса пӑшалтан пеме, бомба пӑрахма чарӑнасса чунтан кӗтетӗп. Шел, юратнӑ аннемпе ҫеҫ урӑх нихӑҫан та алла аллӑн тытӑнса кӑмӑллӑн утса ҫӳреймӗп. Вӑрҫӑ чарӑнсан та...

Шурик Игнатьев... Пурнӑҫа юратакан арҫын ача. Яланах ӳкерме кӑмӑллаканскер пӗр кунхине каллех кӑранташпа хут илсе сӗтел ҫывӑхне ларнӑ. Тӑрӑшса тем ӳкернӗ те ӳкернӗ вӑл. Унтан хӑй ӳкерчӗкне хӑвӑрт ҫеҫ минтер пичӗпе витсе хунӑ.

– Шурик, мӗн ӳкертӗн? – кӑсӑкланнӑ воспитатель.

– Вӑрҫӑ кунне сӑнарларӑм. Сӗтел ҫинче авӑ булка... Манӑн ӑна питӗ тӑраниччен ҫиес килет, – тенӗ арҫын ача куҫҫульне ҫӑта-ҫӑта.

Блокада ачисем... Ытла ир ҫитӗннӗ вӗсем, пурнӑҫ ҫине аслисем пек пӑхма вӗреннӗ.

*Элиза ВАЛАНС хатӗрленӗ.*

Вениамин ТИМАКОВ

# Сӑмах илемне туйсан...

**(сӑвӑ ҫырма вӗренекенсене пулӑшма)**

*(Малалли. Пуҫламӑшӗ 25-32, 34-мӗш номерсенче).*

## Рифма

Силлабо-тоникӑри сӑвӑсене тата силлабикӑн, тоникӑн хӑш-пӗр тӗсӗсенчи тытӑма йӗркелеме рифмӑсем нумай пулӑшаҫҫӗ.

**Рифма вӑл** (грекла – пӗрвиҫелӗх) – сӑвӑ йӗркисене ҫыхӑнтаракан сасӑсене е сасӑсен ушкӑнне темиҫе хут калани. Сӑмахран: *ман шӑпа – ӑшӑпа, паллӑ – палӑк*. Рифма йӗрке вӗҫӗнче те, пуҫламӑшӗнче, варринче те пулма пултарать. Рифма сӑвван тытӑмне йӗркелес, сасӑсен килӗшӗвӗпе янӑравлӑхне ӳстерес, строфасем тӑвас тӗлӗшпе пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Сӑвӑ вӗҫӗсене (клаузулӑсене) шута илсессӗн, хальхи поэзире рифмӑсем виҫӗ тӗрлӗ пулаҫҫӗ: ар, ама: дактиль рифмисем. (Клаузулӑсем пирки эпир «Мӗнпе илӗртет сӑвӑ?» сыпӑкра каланӑччӗ).

Хальхи поэзире ытларах ар тата ама рифмӑсем строфан е сӑввӑн пӗчӗк пайне йӗркелеҫҫӗ. Акӑ, сӑмахран, «Вӑрманӗ, улӑхӗ, уй-хирӗ хывайрӗҫ хӗллехи тумне» – строфан пӗр пайӗ (период), «Тулта ӑш ҫумӑрлӑ ҫу ирӗ, тулта емешӗл ҫуркунне» – иккӗмӗш пайӗ пулса тӑрать. Ку пайсем кашниех икӗ йӗркерен, 17-шер сыпӑкран тӑраҫҫӗ. А.Алкан ҫав сӑввинчи ытти строфасем те пӗтӗмпех ҫакнашкал пайсенчен йӗркеленнӗ. Пайсем кунта ар рифмӑпа вӗҫленеҫҫӗ.

Юр кайрӗ. Сарӑ юпасем
Сӑртах халь улӑхаҫҫӗ –
Пралук йӑтса ман юлташсем
Шӑп тӑнӑн туйӑнаҫҫӗ.

***(Г.Орлов.)***

Асӑннӑ тӗслӗхре ама рифмӑпа вӗҫленекен икӗ периода куратпӑр. Поэзире периодсем иккӗ, виҫҫӗ е ытларах йӗркерен тӑраканнисем те пур. Вӗсем ӗнтӗ строфасен тытӑмӗн хӑйнеевӗрлӗхӗнчен, авторӑн форма тӑвас ӑсталӑхӗнчен килеҫҫӗ.

В.Алентейӗн «Апрель» сӑввинче вара тӑватӑ йӗрке пӗр период пулать:

Шӑнкӑрчсем хавас юрлаҫҫӗ,
Шарласа шывсем юхаҫҫӗ,
Йӑмрасем кӑчка лараҫҫӗ, –
чаплӑ-ҫке апрель!

Сӑвӑри йӗркесем пӗр-пӗринпе тӗрлӗрен рифмӑланма пултараҫҫӗ. Хальхи поэзире хӗреслӗ, юнашар тата ҫавра рифмӑсем ытларах тӗл пулаҫҫӗ.

Хӗреслӗ рифма тесе йӗрке урлӑ пӗр пек рифмӑсем вырнаҫса пынине калатпӑр. К.В.Ивановӑн «Нарспи» поэминче тӑршшипех хӗреслӗ рифма. Ытти поэтсен сӑввисенче те вӑл час-часах тӗл пулать:

Ҫурхи сывлӑш чӗрене вӑй па**чӗ**, /а/
Ешерет умра хӗвеллӗ **Май**. /б/
Чечекре колхозӑн капӑр са**чӗ**, /а/
Улмуҫҫи, чие унта ну**май**. /б/

***(М.Волкова.)***

(Кунта а, б паллӑсемпе йӗркесен пӗр пек вӗҫӗсене палӑртнӑ).

Пӗрешкел вӗҫленекен, юнашар тӑракан сӑвӑ йӗркисен вӗҫӗсене **мӑшӑр рифма** теҫҫӗ (а а б б):

Ҫурхи хӗвел ҫутинче
Ырӑ та-ҫке ҫут тӗнче!
Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхать,
Чӑмпӑлт-чӑмпӑлт хум вылять.

***(Г.Краснов-Кӗҫӗнни.)***

*Ҫавра рифмӑра* пӗрремӗшпе тӑваттӑмӗш, иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш йӗркесен вӗҫӗсем пӗрешкел пулаҫҫӗ (а б б а):

Тахҫан-тахҫан, ача чухне /а/
Сире пӗрремӗш хут тӑнлуҫӑн, /б/
Эсир мана кӑтартрӑр уҫҫӑн /б/
Чӑвашӑн тӳсӗмлӗ чунне. /а/

***(П.Хусанкай.)***

Нумай йӗркеллӗ ҫаврӑмсенче (строфасенче) пӗр харӑсах тӗрлӗ йышши рифма та пулма пултарать. Сӑмахран акӑ октавӑра (сакӑр йӗркерен тӑракан ҫаврӑмра) хӗреслӗ тата мӑшӑр рифмӑсене куратпӑр.

Вӑрман сап-сарӑ. Хӗрелет йӗлме, /а/
Турат ҫинче силленчӗ ҫулҫӑ. /б/
Умра курмастӑп эпӗ ҫереме. /а/
Хире кӑвак тӗтрелле сывлӑш тулчӗ, /б/
Анчах та ҫил лӑпкарӗ лӗпкеме, /а/
Хӳтерчӗ тӗтрене, ӑна вӑл ҫулчӗ. /б/
Улӑхсенче нартлатрӗ кӑвакал. /в/
Ҫырансене ҫурса кӗрлет пӑшал. /в/

***(Ухсай Яккӑвӗ, «Кӗрхи октавӑсем».)***

(Рифмӑсен тӗрлӗ енлӗхне «Сӑвӑ ҫаврӑмӗсем» сыпӑкра тимлӗрех сӑнӑр).

Халӑх поэзийӗнче, ҫавӑн пекех сӑвӑҫсен пултарулӑхӗнче те, йӗрке вӗҫӗнчи рифмӑсем кӑна мар, йӗрке пуҫламӑшӗнчи тата варринчи рифмӑсем те аталанса пынӑ. Вӗсем сӑвӑ-юрра ҫепӗҫҫӗн илтӗнекен кӗвӗ, ҫынсен асне юлмалӑх туйӑм, витӗмлӗх панӑ. Чӑваш поэзийӗнче те эпир ҫак ен сӗм-авалтанпах аталанса, ҫирӗп тымар ярса тӗреклӗннине куратпӑр. Итлесе пӑхар-ха халӑх юррисене. Мӗн чухлӗ унта пӗр евӗрлӗ пуҫланакан йӗркесем! Тӗслӗхрен: «Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юхать, // шӑнкӑрч чӗппи шыв ӗҫет», «Аттемӗн савнӑ ачи эп, // арчи тӗпӗнчи мулӗ эп, // аннен ачаш чунӗ эп...» Пӗрремӗш юрринче **ш** сасӑ янӑранипе икӗ йӗрке пуҫламӑшӗнче тӗп кӗвӗ илтӗнет (пуҫламӑшӗнче кӑна мар, йӗркесен варринче те янӑрать вӑл). Иккӗмӗш юрӑра **а** сасӑ тӗп вырӑнта тӑрать. Сӑввӑн виҫӗ йӗрки те унпа пуҫланать. Кунта эпир **аллитераципе ассонанс** тӗслӗхӗсемпе тӗл пулатпӑр. (Аллитераци – сӑвӑра пӗр йышши хупӑ сасӑсем, ассонанс – пӗр йышши уҫӑ сасӑсем янӑрани).

Чӑваш юррисенче час-часах сӑвӑ варринчи янӑрав та тӗп вырӑн йышӑнать. Сӑмахран, йӗрке варринче тӗл пулакан ай сасса шалти рифма теме пулать.

Хура халӑх куҫҫуллисем, *ай*, шывсем мар...
Ҫунса кайрӗҫ Ҫӗрпӳ, *ай*, тӳрисем
Пӑкача та патша, *ай*, хушнипе,
Хура халӑх ылханӗ, *ай*, ҫитнипе!

Ҫавӑн пекех варринчи чарӑну (пауза) пӗлтерӗшне те палӑртать ку сасӑ.

Рифмӑсем туллисем тата тулли маррисем пулаҫҫӗ. Тулли рифмӑсенче пусӑм пӗр пек уҫӑ сасӑсем ҫине ӳкет, хупӑ сасӑсем те пӗр йышшисемех пулаҫҫӗ. Тӗслӗхрен: *хурлӑ – урлӑ, ӗлӗк – тӗлӗк*. Малтанхи тӗслӗхре пусӑм **у** сасӑсем ҫине, иккӗмӗшӗнче **ӗ** сасӑсем ҫине ӳкет.

Тулли мар рифмӑсем вара тӗрлӗ йышшисем пулаҫҫӗ.

1. Пусӑмсем пӗр йышши уҫӑ сасӑсем ҫинех ӳкеҫҫӗ. Анчах вӗсем хыҫҫӑн тӑракан хупӑ сасӑсем пӗрешкел мар. Кунашкал янӑрава **ассонанс** теҫҫӗ. Акӑ: *тусӑм–куҫӑм* рифмӑра пусӑм **у** уҫӑ сасӑ ҫине ӳкет, ун хыҫӗнчи хупӑ сасӑсем вара тӗрлӗрен: **с–ҫ.**

2. Пусӑмсем тӗрлӗ йышши уҫӑ сасӑсем ҫине ӳкеҫҫӗ. Вӗсен хыҫӗнчи хупӑ сасӑсем вара пӗр пек. Ҫакӑн йышши янӑрава **коссонанс** теҫҫӗ.

Тӗслӗх: *ҫумӑр–хамӑр*. Кунашкал рифмӑсем ӑнӑҫсӑр шутланаҫҫӗ. Вӗсем сӑвӑ вӗҫӗнчи кӗвве, ритм йӗркеленӗвне пӑсаҫҫӗ.

3. Хӑш чухне рифмӑри сыпӑксен шучӗ пӗр пек пулмасть. Тӗслӗхрен: *са-рӑ – са-рӑл-нӑ*. Ку ытларах тоникӑллӑ сӑвӑсенче тӗл пулать.

4. Катӑлнӑ рифмӑсем. Пусӑм умӗнхи сыпӑк «катӑлнӑ» евӗр туйӑнать. Тӗслӗхрен: *шав – ла-ша.*

***(Малалли пулать.)***

## Ваттисене юратса

Ваттисем, сире халалласа
Эп ҫыратӑп халӗ ҫак сӑвва.
Сире мухтаса та юратса,
Нумай-нумай ыр кун-ҫул сунса.

Эсир хисеплӗ, ӑшӑ чунлӑ,
Ӗҫре маттур та пултаруллӑ.
Хура-шурне сахал мар курнӑ,
Чунпа ҫапах хаваслӑ юлнӑ.

Ачӑрсем сире юратчӑр,
Мӑнуксем вара ан манччӑр,
Ӑшӑ сӑмахсем калаччӑр,
Яланах ӑш пиллӗ пулччӑр.

***Настя РОМАНОВА.***

Муркаш районӗ,
Ҫатракасси шкулӗ.

## Пирӗн кил

Тимӗр шапа хӑй «пӳртне»
Ҫакрӗ ҫурӑмӗ ҫине.

Кайӑк-кӗшӗк йӑвара
Пурӑнать, пӗлен ҫакна.

Вӑрманта – тилӗ йӑви.
Ыйхӑлать шӗшкӗ майри.
Кашкӑр ҫури амӑшпе
Юнашар ҫывӑрать, тепре.



***Елена ПЕТРОВА** (Вӑрнар районӗ, Кӳстӳмӗр шкулӗ) **ӳкерчӗкӗ.***

Каюра суха касси
Турӗ ашкӑнчӑк чӗппи:
Тутлӑ кишӗр йӑранне
Чаврӗ, турӗ тӗмеске.

Акӑ шӑрчӑк сас парать:
Вӑл сӑпка юрри юрлать.
Тӗлӗрет каҫпа уй-хир.
Уй – чечеклӗ анлӑ пир.

Юшкӑн тунӑ пӗвере –
Шапасем. Вӗсен – ҫемье.
Сырса илчӗ тӗрлӗ вис,
Нимӗнле вӗсен ҫук чыс.

Кур: кашта ҫинчен автан
Уҫҫӑн сасӑпа: «Вӑран,
Тус-юлташӑм, эс часрах!» –
Тесе тытрӗ ҫав сӑмах.

Нӑрӑ иртрӗ вӑслатса…
Сар чечек ҫине сӑпса
Ларчӗ, пуҫтарать сӗткен:
Ай-ай, тутлӑ та иккен!

Витере тӑрать ӗне,
Ҫилли тулнӑ шур сӗтпе.
Ҫилхине силлет лаша:
Каяс тет уя, ара.

Пӳрт тулли – ача-пӑча:
Яш каччӑ та хӗрача.
Пулӑ шывшӑн пит ҫунать,
Сар кушак ҫури вылять…

Пурӑнмалли кирпӗч ҫурт
Ҫын тумашкӑн тытрӗ шут.
Чӑн, пӗлтерӗшӗ татах
Шутланинчен пысӑкрах.

Пӗтӗмлетсе каласан,
Пирӗн кил – тӗнче таран!
Ҫӗр чӑмӑрӗ пит патрак:
Упрасам ӑна пӑртак!

Каҫ пулсассӑн витере
Шӑпланаҫҫӗ выльӑхсем.
Пӑш! та пӑш! сывлать ӗне
Ырӑ тӗлӗк курнӑҫем.

Кӗтесре – ҫӑка кашта:
Тӗлӗреҫҫӗ ав чӑхсем.
«Шим-шим-шим!» – тесе шывра
Тӗлӗреҫ хур чӗпписем.

Уснӑ ӑйӑр та пуҫне,
Ыйхӑлать-ҫке пӗчӗкскер.
Юнашар – лаша-анне,
Питӗ лӑпкӑ, чиперскер.

Ҫухрашса сысна ҫури
Выртрӗ амӑшӗ ҫумне.
Тӗнчере чи лайӑххи –
Аннепе пӗрле чухне.

***Татьяна ДОРОФЕЕВА.***

Вӑрмар районӗ,
Вӑрмар.

**Куҫӗсем йӗри-тавра, шухӑшӗ пуҫ тавра.**

# Хаваслă 2015 самант

## Сăмахкаçмăшсем



**Сылтăмалла:** 1. А.Суворовăн пуçламăш çар званийĕ. 4. «Сĕве Атăла юхса кĕрет» кĕнеке авторĕ. 10. Çурăм хыçĕнчи «хутаç». 11. Кĕвĕ инструменчĕ. 13. Ял пайĕ. 14. Тĕвесен ушкăнĕ. 15. Салтаксен тăваткал евĕр ушкăнĕ. 18. Вĕçсĕр-хĕрсĕр шыв лаптăкĕ. 19. «Хĕн-хур айĕнче» хайлаври сăнар. 20. Кĕрхи чечек. 22. Тавар тултармалли пысăк чăматан. 23. Стройкăри «чарлан». 25. Тапăну. 28. Макăртакан пахчаçимĕç. 29. Икĕ вĕçлĕ япала. 34. Хресчен «транспорчĕ». 35. Хурт-кăпшанкă. 36. Пĕвери «юрăç». 39. Кану çурчĕ. 40. Çурçĕрти хула. 41. Турцин тĕп хули. 42. Тăмана евĕрлĕ попугай.

**Аялалла:** 1. «Вĕç, вĕç, ...» /юрăран/. 2. Лаурăна халалласа чылай çырнă сăвăç. 3. Пулăçăн ĕç хатĕрĕ. 5. Мачча мар. 6. Вăл кĕнекен пур. 7. Норвегин чапа тухнă тинĕс ишевçи. 8. Ăна хуралçă сыхлать. 9. Утă-улăм купи. 12. Хаклă йышши чулсен виçи. 16. Пушă. 17. Кăнтăрти йывăç. 20. Çăнăх сăвăрмалли хатĕр. 21. Çурхи ĕççи. 24. Хитре Хĕрккен хĕрĕх муркка /туп.юм./. 26. Унта тырă авăртаççĕ. 27. Тĕнчери чи пысăк стадион. 30. Калмыксен тĕп хули. 31. Хими элеменчĕ. 32. Суту-илӳ вырăнĕ. 33. АПШри кĕвĕ инструменчĕ. 37. Пыл хурчĕсен курорчĕ. 38. Юн тымарĕ.



**Сылтăмалла:** 1. Кун пайĕ. 5. Çар званийĕ. 8. Ç.Элкер хайлавĕнчи сăнар. 9. Робинзон Крузо «хваттерĕ». 13. Сăвăçсен сăваплă вырăнĕ. 14. Кăнтăр енчи сăрт-ту. 16. Тĕс. 19. Унта Чапаев путнă. 20. Авалхи çыру хатĕрĕ. 21. Ĕç укçи. 23. Çĕр лаптăкĕ. 25. Чăваш юрăçи. 27. Пуçа тăхăнмалли хатĕр. 28. «Хĕрлĕ автан». 29. Пĕвери лачакаллă вырăн. 31. Хурт-кăпшанкă. 32. Шахмат вăййинчи тамаша.

**Аялалла:** 2. Панулми сорчĕ. 3. Çурт «кăшкарĕ». 4. Пулас генерал. 6. Ăна уяв ячĕпе параççĕ. 7. Кăнтăрти пылак çимĕç. 10. Пушă. 11. Вăл çĕршыв старости пулнă. 12. Тĕвесен ушкăнĕ. 15. Ун вĕçĕ-хĕрри çук теççĕ. 16. Вăрман «патши». 17. Пысăк попугай. 18. Кĕлетке пайĕ. 22. Урана тăхăнмалли хатĕр. 24. ... çăлтăрĕ. 26. Буржуй апачĕ. 27. Пахчаçимĕç. 30. Чиркӳллĕ ял.



**Сылтăмалла:** 5. Шурă кирпĕч. 6. Лаша. 7. Вĕренӳ пӳлĕмĕ. 8. Вăл мăйăр шĕкĕлчеме юратать. 11. Чапа тухнă чура. 13. Сирпĕтмелли хатĕр. 14. Пăрăхсене çыпăçтаракан. 15. Р.Сарпи сăвăçăн хайлавĕ. 19. Ӳнерçĕн ĕçĕ. 22. Пушхир кушакĕ. 23. Ăсчахăн ĕçĕ. 24. Анод, катод, ... 25. Çул çинчи пăтăрмах. 26. Хурт-кăпшанкă. 27. Вăтаçĕр тинĕсри утрав.

**Аялалла:** 1. Лаша таврашĕ. 2. Венесуэла тĕп хули. 3. Теоретик мар. 4. Тахçан вăл çĕршыв старости пулнă. 7. Савăт-сапа. 9. Кавказ тăрăхĕнчи юханшыв. 10. Айванккарахскер. 12. Çулталăк пайĕ. 13. Пĕчĕк ача сасси. 16. Физика терминĕ. 17. Чĕнсе илекен транспорт. 18. Пушă. 19. Çар званийĕ. 20. Мордва Республикинчи хула. 21. Вĕçенкайăк.

**Çак телефон дискĕн çаврашкисенче ваттисен каларăшĕ пытаннă. Ăна вулама вара ятарлă код кирлĕ. Эппин, ăçтан шыраса тупмалла-ши ăна? Çакна çеç каламалла: салтак пуртăпа пăтă пĕçерне евĕр, кăштах тавçăрулăх кăна пулмалла. Ăнăçу сунатпăр!**




*Çакăнта илсе кăтартнă саспаллисене вырăна лартсан тăватă сăмах вуласа пĕлме пулать. Апла ĕçе тытăнар, ун чух кайĕ вăл вăр-вар!*




***Николай КРАСНОВ** (Йĕпреç районĕ) **хатĕрленĕ.***